# Я.Ухсай поэзийĕнчи Эдем пахчи, е епле поэт "çылăхлă" юрату тыткăнĕнчен çăлăнни

> Эдем - çĕр çинчи çăтмах, сыпсене юрату çылăхне кĕриччен турă панă сăвапла вырăн, тулăхлă-илемлĕ çутçанталăк кĕтесĕ. Эдем çĕршывĕн пахчинче Адампа Ева çаппа-çарамас çÿренĕ, пĕр-пĕринчен вăтанман ("Библи" сăваплă кĕнекерен.)

Поэт тĕнчи - асамлă тĕнче. Унăн поэзине сăн паракан туйăм - Эросăн тĕлĕнтермĕш хăвачĕ. Кашни сăвăçăн ар туйăмĕсен таппи лирикăра тĕрлĕ шайра: пĕри ним пытармасăр калать ун çинчен, тепри именерех хускатать ку темăна, виççĕмĕшĕ ÿстеререх те сăнлать... Тепле пулсан та, çак интимлă кăмăл-туйăмсен витĕмне сăвăпа айкашакан кирек епле сыравçă та туймасăр ирттерсе яраймасть. Сăвăç кăна-и? Калăпăр, евнух, гаремри тарçă, хăйĕн ар паллисемсĕр юлнă арçын е мăнастирти тĕнче çылăхĕсенчен кельăра тарса пытаннă манах - ÿтпе мар пулсан та, чун-чĕрепе çак "улттăмĕш туйăма" (Н.Гумилев) сисетех, мĕнле те пулин палăртатех: ăса пăхăнмансерсем-çке вĕсем, эротикăллă туйăмсен этем ăшĕнчи урăм-сурăмĕсем.

Чăваш поэзийĕнчи чăннипех те тĕлĕнтермĕш сăвăçсенчен пĕри - Я.Г.Ухсай. Мĕншĕн тесен вăл - эрос-ар туйăмĕсенчен, вĕсен илĕртÿллĕ, çылăхлă тыткăнĕнчен хăтăлма пултарнă поэт. Унăн хăйĕн Эдем пахчи (çылăхсăр тĕнчи), çак пахча картинчен тухасшăн мар поэт, "çылăхлă" тĕнчене кăмăлтан йышăнасшăнах мар. Адампа

Ева çылăха кĕриччен çӳренĕ пахча (панулми активсе пăхиччен) - Ухсайшăн та "çĕр çинчи çăтмах".

Поэт çунат хушаканччĕ, çĕртен уйрăлаканччĕ - Ухсай апла мар, вăл - "тăпра поэчĕ": "Шап-шурă пĕлĕт тăрăх çӳреме, куратăн-и, ман урасем тăпраллă..." Ухсай хăй туйăмĕсене ютта шанса парасшăнах мар, хĕрарăма пушшех те. Унăн поэзи философийĕ - пĕчченлĕхре. Поэзире те ("Хам пĕлнĕ пек шăратăп кĕввĕме"), юратура та ("Чăннипех те çивчĕ хачă Касрĕ-ши юратăва?") Ухсай хăйне ытларах шанать, никамран пулăшу кĕтмест.

Çамрăк поэтăн юратăвĕ вăйлă туйăмлах мар, тепре чухне кĕвĕçӳ - вĕчĕрхенӳллĕ те. Вăл хăйне асăрхасса ытларах кĕтет. "Начар теместĕп хамăн сăнăма" ... - текелет поэт тăтăшах. "Ура тапса, пуçа ухса" хăйне мухтать Ухсай. Кашни поэт чи малтан хăйне пысăка хупи (хăйне ним вырăнне хуманнисем те чылай) пит начар япалах мар. Акă, Пушкин та çак йĕркесенче хăйпе-хăй савăнать: "Ай-да Пушкин, ай-да сукин сын". Поэт псевдонимĕ те - хăйĕнпе киленнинчен çуралнăскер. Ăна вăл "Ача чухнехи çăлтăрăм" поэмăра каласа хăварать. Ух! междометипе "сай" çармăс сăмахĕнчен пĕрлештерсе тунăскер иккен унăн литературăри иккĕмĕш ячĕ: "Хитре тени пулать вăл çармăсла ", "... Хама янравлă ятлă эпĕ турăм ... "

Тепре чухне поэт эгоизмĕ хăйне тивĕçлĕ хакланинчен те ытларах пек туйăнать. Паллах, поэт хăйне пысăка хунипе никама та сиен тумасть, сăмах ăсти чи малтан хăйне асăрхать, хăй чунĕ урлă вара - тĕнчене. Эдем пахчи карти урлă "çылăхлă" тĕнчене сăнать Ухсай. Çак тĕнчери хĕрарăм та çылăхсăр мар иккен, вăл хушăран икĕпитлĕ те, хăйне тивĕçлĕ арçынна та асăрхамасть, хушăран, теприсем çине те пăхкалать:

*Халь ăçта эсир, хура куççем:*  
*Кам çине пăхатăр япанах,*  
*Асăрта тытатăр-и мана?*

Е тата :

*Сăмахна манса, чĕрӳ кăварĕ*  
*Теприне хĕртни çинчен пĕлсен,*  
*Хурланса сасартăк кăвакарĕç,*  
*Хуп-хура ман çӳçĕн пĕрчисем.*

Черченкĕ, илемлĕ, илĕртӳллĕ хĕрарăм сăнарĕ çукрах Ухсайăн, пур пулсан та унăн арлăх паллисене, эротикăллă сăн-сăпатне сăрламасть поэт. Ухсай хĕрарăмĕ - çĕр çинчех, сăвăçпа юнашарах, алă тăс та - вăл санăн ытамра, ăна тилмĕрес çук, пуççапас çук. Хĕрарăма тӳпене çĕклесе, идеалист-романтик пек, ним тулккисĕр кармашмасть, вăй хумасть поэт. Хĕрарăм хăйне кӳрентернине е асăрхаманнине пит каçарасшăнах мар вăл:

*Вăхăт иртрĕ. Иртрĕ виçĕ çул*  
*Тин мана ан сав, ан тăк куççуль.*

Юратура ӳпкелешӳсӗр пулмасть: "Нумайранпа вӑл савнӑ теприне...", "Юрататтӑн эсӗ теприне..." Хайне ӳпкелесен те, сахал пурӑнни ҫине йӑвантарать, айӑпне ҫулсен сисӗмлӗхӗнче шырать: "Ҫамрӑк пуҫ, юратура, эх айван иккен, айван...", "Мӗншӗн иккӗ пулчӗ-ши хӗр сукмакӗ ҫул ҫинче."

Юрату - ар туйӑмӗсене те поэт ҫиеле кӑларма юратмасть: суха туса, васкамасӑр, ҫураки тунӑ евӗр, пурнӑҫӑн ытти вак-тӗвекӗсемпе пӗр шайра тӑнӑ пек куратпӑр ҫак кӑмӑла:

*Юратрӑм эпӗ.*
*Илтӗм эпӗ арӑм.*
*Тути те унӑн*
*Тутлӑ чуп тума.*
*Чӗлхи те унӑн ҫивчӗ*
*Калаҫма.*

Поэзири ӗҫтешне, П.Хусанкая, Ухсай хӗрарӑм ҫине ӗҫлӗрех, лӑпкӑрах, романтика тӗтӗмне кӑлармасӑр пӑхма хистет, ар туйӑмӗсене пит ирӗке ямалла марри ҫинчен тӗкерех калать:

*Ҫыратӑн вӑтӑр ҫул ытла та ӗнтӗ*
*Хӗрсем ҫинчен, хӗрсем ҫинчен кӑна.*
*Тархасшӑн, тусӑм, эс пӗрре пулин те*
*Сӑвва кӗртсе хӑвар-ха арӑмна.*

1930-33 ҫулсенче поэт Мускав университетӗнче вӗренет. Анчах хула кӗрлевӗ те, студентсене кӑсӑклантаракан поэзири плюрализм та Ухсая илӗртмест, "Силпи ҫилӗсемпех" аташать вӑл. "Поэт, атя хире!" - тесе чӗнет хайне. Пӗррехинче Ухсай Н. Гумилевӑн "Шестое чувство" текен сӑввипе паллашать: "Ухсай "краснел от стыда" и удивлялся, как это стихотворение могло быть напечатано" (Б.Бассаргинӑн "Яков Ухсай" кӗнекинчен, 18 с.) Мӗн пулнӑ-ха Ухсая, мӗн ҫав тери иментернӗ? Вырӑс поэчӗ хайӗн эротика туйӑмӗсене уҫҫӑн каланине йышӑнмасть Ухсай, ун психологийӗн картине вырнаҫман ку тӳрӗ сӑмах. Гумилевӑн сӑвви - арҫынӑн эротика туйӑмӗсен хӑватне мухтакан хайнеевӗр гимн: "Хӗрарӑм парнелет пире асаппине те, ар канӑҫлӑхне те..." Ухсайшӑн, поэзири темле "измсене" йышӑнманскере, юрату ҫине капла "ҫылӑхлӑ" пӑхни - хай чунӗпе ҫӳрекен "Эдем пахчин" лӑпкӑ идиллине пӑснипе пӗрех.

Поэтӑн темле сыхлӑх туйӑмӗсем те пур пулас. Шурӑ офицер Гумилев, имажинист Есенин тата поэт-формалистсем унӑн поэзийӗн лӑпкӑлӑхне, ҫутҫанталӑк гармонине пӑсассинчен те сыхланнӑ вӑл, пурнӑҫӗ йывӑрланасса сиснӗ унталла-кунталла туртӑнсан. Пӗр "измне" йышӑннах Ухсай: социализм саманине мухтани - ҫак вӗрентӗвӗн илӗртӳлӗхӗнчен килнӗ пулас.

Поэт лирикинче сӑнланнӑ хӗрарӑм сӑвӑҫ чунӗнче ҫӑмӑл шухӑшсем ҫуратмасть, типӗрех сӑрсемпе сӑрлать ӑна вӑл: аллине ҫурла тытнӑ амӑшӗн сӑнарӗ, асаилӳри тӗксӗмрех курӑнакан ӗлӗкхи савни сӑнарӗ... Ухсай хӗрарӑмӗ сӑнӗпе "чечек пекех илемлетет ҫӗре" (поэт чунне мар), е вӑл хай ӗҫӗпе илемлӗ... Поэт лирикинчи хӗрарӑм

сăвăçăн чунĕнчи арлăх кăмăлне çуратма пултараймасть, вăл ăна уншăн кирлех те мар. Хĕрарăм тени çутçанталăкпа гармониллĕ-виçеллĕ пултăр, ан пăстăр вăл çав килĕшĕве (уçă эротика кĕввисем валли кун пек кăмăлпа çыракан поэтра вырăн çук):

*Пĕр çутçанталăк çеç тӳрлетĕ*
*Ăна хăй тунă тĕнчинче.*

Поэт пичетленнĕ пĕрремĕш сăввинче те: "Юратрăм эп, "хĕрсем", сире" тес вырăнне "хирсем" тесе ярать, юрату вут-çулăмĕнчен пăрăнать. Çапла поэт ар-юрату канăçлăхĕнче мар курать çын телейне. Çын телейĕ - çутçанталăкра, унпа килĕшӳллĕ пурăннинче. Ахальтен мар кулленхи пурнăçăн çылăхĕсенчен тасатакан символ та Ухсайăн - мунча, чăваш мунчи. Поэт хăй мунча кĕрет-и, геройĕсем-и - мунчара çеç канăçлăх тупăнать вĕсемшĕн. Поэт хăйĕн 70 çулхи юбилейĕнче каланă евĕр "хут çинче те кут çинче тытăнса тăракан хальхи пурнăçăн" усал кирĕкĕсене çуса тасатма та мунча пулăшать. Ухсай мунчи - Эдем пахчине кĕричченхи тасату символĕ.

Кăмăлсăр пулмалли, хуçăлмалли сăлтавсем пулнах çав поэт пурнăçĕнче: вăл автомобиль катастрофине лекни, малтанхи кăкăр ачи çĕре кĕни, хваттерĕ çунса кайни, мăшăрĕпе поэт хушшинче пулса иртнĕ инкеклĕ пăтăрмах, чунĕ йышăнман çынсем пурри тата ытти пурнăç кукăр-макăрĕсем пырса тивни поэт чунне амантнах. Анчах вăл хăй поэзири тапса тăракан хăватне çухатман, çутçанталăк паракан хăвата. Çур ĕмĕре çитсен поэт ностальгилле шухăша кайни те пулкалать:

*Çап-çамрăк чухнехи инçе юратăва*
*Хампа пĕрле усрарăм та ăна манмарăм.*

Çак ӳкĕнӳ юрату кĕввисене хăй сăввисенче сахал вырăн панă тесе шутласси патне те илсе çитерет поэта. "Хам хывнă çип-çинçе сукмак ăçта?" - тет сăвăçă, ĕлĕкхи юрату сукмакне шыраса, анчах вăл илемлĕ сукмака "асфальт хупланă"...

"Аллисем аттен питĕ хытăччĕ, тимĕр алăсем темелле," - тет Елена хĕрĕ, аппĕ çинчен аса илсе, вăл ачашлама юратсах кайманнине палăртса. Пурнăçри тӳрккесрех кăмăлĕ те, шăнăрлă характерĕ те унăн поэзири тӳрĕлĕхне, пытарăнчăк çиллипе пит хĕрӳллех мар юратăвне те калăпланă пулас. Çемьепе те пит тăтăшах пулма юратман вăл, ялта пĕччен юлса ĕçлеме тăрăшнă. Çемьери хĕрарăм ачашлăхĕ те илĕртсех кайман пулмалла поэта, иртен-каян хĕрарăм сăнарĕ те астарман унăн туйăмĕсене. Вăл çутçанталăкпа çывăхрах пулас тенĕ, çамрăкран вăл унта çеç çăлăнăç курнă. Эдем çĕршывĕн сывлăшне çеç кăкăрне тултарас тенĕ. Çакнашкал хупăнчăкрах кăмăл пулнипех пулĕ, ун çинчен аса илнисем те сахалрах, тата поэт юратăвĕн хăйевĕрлĕхне те сăнама çăмăлах мар. Çак пĕчченлĕхре ĕнтĕ, Эдем пахчин лăпкăлăхĕнче, Ухсай пултарулăхĕн хăвачĕ. 1992 ç.